Иисус Христос кăна çăлать

Вăл ывăл çуратĕ, эсĕ ăна Иисус ятлă хурăн, мĕншĕн тесессĕн Вăл Хăйĕн халăхне çылăхĕсенчен çăлĕ». Матфей 1:21

Мĕншĕн тесен Турă тĕнчене çав тери юратнăран Хăйĕн пĕртен-пĕр Ывăлне панă: Ăна ĕненекен кирек кам та ан пĕтĕр, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пултăр. Иоанн 3:16

«Эпĕ — çул та, чăнлăх та, пурăнăç та», – тенĕ ăна Иисус. Атте патне Ман урлă пулмасан никам та пыраймасть. Иоанн 14:6

Çăлăнăç урăх никамра та çук, мĕншĕн тесен тÿпе айĕнче пире çăлăнма пултаракан урăх ят çук. Апостолсен ĕçĕсем 4:12

Мĕншĕн тесен эпĕ сире чи малтан хамăн йышăнăва вĕрентрĕм: Христос пирĕн çылăхсемшĕн вилнине, Çырура çырнă пек; Çырура каланă пек, ăна пытарнă, виççĕмĕш кунне чĕрĕлсе тăнă: 1 Коринф 15:3—4

Христос урлă пире Унăн Юнĕ урлă çăлса хăвартăмăр, Унăн ырăлăхĕн пуянлăхĕпе çылăхăмăрсене каçарчĕ. Ефес 1:7

Пирĕн туллин ăнланмалла тăвата чăнлăх пур:

1. Турă сана питĕ юратать.

Вăл сире Хăйпе пĕрле пĕлĕтре ĕмĕрлĕх пурнăç парасшăн.
Мĕншĕн тесен Турă тĕнчене çав тери юратнăран Хăйĕн пĕртен-пĕр Ывăлне панă: Ăна ĕненекен кирек кам та ан пĕтĕр, ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пултăр. Иоанн 3:16

Вăл сире Хăйпе пĕрле çителĕклĕ те пĕлтерĕшлĕ пурнăç пултăр тет.
Вăрă-хурах вăрлама, вĕлерме, пĕтерме çеç килет: Эпĕ вĕсен пурăнăçĕ пултăр, вĕсем ытларах пулччăр тесе килтĕм. Иоанн 10:10

Апла пулин те, нумайӑшӗ пӗлтерӗшлӗ пурнӑҫа туймасть, ӗмӗрлӗх пурнӑҫ пурripe ҫуккине пӗлмеҫҫӗ, мӗншӗн тесен...

2. Ҫын ҫут ҫанталӑкран ҫылӑхлӑ. Ҫавӑнпа вӑл Турӑран уйрӑлса тӑрать.

Пурте ҫылӑха кӗнӗ.
Мӗншӗн тесен пурте ҫылӑха кӗнӗ, Турӑ мухтавне ҫитеймен; Рим 3:23
Мӗншӗн тесен укҫана юратни — пур усалӑн та тымарӗ... 1 Тимофей 6:10

Ҫылӑх тӳлевӗ — вилӗм.
Мӗншӗн тесен ҫылӑх тӳлевӗ — вилӗм... Рим 6:23

Библире икĕ тĕрлĕ вилĕм çинчен каланă:

• Ӳт-пӳ вилĕмĕ
Çынсем пĕрре вилме палăртнă, унтан вара суд пулать: Еврейсем 9:27

• Сывлăш вилĕмĕ е тамăкра Турăран ĕмĕрлĕхех уйрăлни
Анчах та хăравçăсем, ĕненменнисем, ирсĕррисем, çын вĕлерекенсем, аскăнçăсем, тухатмăшсем, йĕрĕхсене пуççапакансем, пур суеçĕсем те вут-çулăмпа кӳкĕртпе çунакан кӳлĕре хăйсен пайне илĕç. Ӳлĕмхине 21:8

Енчен те этем хăйĕн çылăхне пула Турăран уйрăлса кайнă пулсан, çак ыйтăва мĕнле майпа татса пама пулать? Эпир час-часах çапла шутлатпăр: çак ыйтăва татса памалли майсем: тĕн, ырă ĕçсем тата лайăх йăла-йĕрке.

Анчах Турăран пĕр решени çеç пур.

3. Иисус Христос пĕлĕте çитмелли пĕртен-пĕр çул.

Ку вăл Турă пĕлтерĕвĕ.
«Эпĕ — çул та, чăнлăх та, пурăнăç та», – тенĕ ăна Иисус. Атте патне Ман урлă пулмасан никам та пыраймасть. Иоанн 14:6

Вăл пирĕн çылăхсемшĕн тулли наказани панă.
Мĕншĕн тесен Христос та çылăхсемшĕн пĕрре асапланнă, тӳрĕ çын тӳрĕ маррисемшĕн, пире Турă патне илсе çитерме, ӳт-пӳпе вĕлернĕ, сывлăш урлă чĕртсе тăратнă: 1 Петр 3:18
Христос урлă пире Унăн Юнĕ урлă çăлса хăвартăмăр, Унăн ырăлăхĕн пуянлăхĕпе çылăхăмăрсене каçарчĕ. Ефес 1:7

Унăн ĕмĕрлĕх пурнăç пама сăмах пур.
Ывăлне ĕненекенĕн ĕмĕрлĕх пурăнăç пур, Ывăлне ĕненменни пурăнăçа кураймĕ; анчах Турă çилли ун çинче тăрать. Иоанн 3:36
Мĕншĕн тесен çылăх тӳ́левĕ — вилĕм; анчах та Турă парни вăл – пирĕн Хуçамăр Иисус Христос урлă ĕмĕрлĕх пурăнăç. Рим 6:23

4. Çăлăнас тесен пирĕн Иисус Христоса ĕненмелле.

Пирĕн çăлăнăç Иисус Христоса ĕненнипе Турă ырăлăхĕпе килет.
Мĕншĕн тесен эсир ĕненнипе ырăлăхпа çăлăннă; ку вара хăвăртан мар, Турă парни, ĕçĕртен мар, никам та мухтанмалла мар. Ефес 2:8—9

Мĕншĕн тесен Çӳлхуçа ятне чĕнекен кирек кам та çăлăнĕ. Рим 10:13

Çылăхлă çын кĕлли

Çакна ĕненсе кĕлтăвăр:
Иисус Çӳлхуçамăр, мана юратнăшăн пысăк тав сире. Эпĕ хам çылăхлă пулнине йышăнатăп, санран каçару ыйтатăп. Хĕрес çинче вилнĕшĕн, пытарнăшăн тата манăн мĕнпур çылăхăмсемшĕн тӳлеме чĕрĕлсе тăнăшăн тавтапуç сана. Эпĕ сана хамăн Çӳлхуçамăма тата Çăлаканăм вырăнне хуратăп. Эпĕ санăн ĕмĕрлĕх пурнăç парнине йышăнатăп та хамăн пурнăçа сана паратăп. Хăвăн мĕнпур ӳкĕтӳсене пăхăнса пурăнма, Сан умăнта юрăхлă пулма пулăш мана. Аминь.

Эсир Иисус Христоса шаннă пулсан, сирĕнпе çакăн пек пулса тухнă:

• Халĕ ĕнтĕ эсир Турăпа пĕрле ĕмĕрлĕх пурнăç пур.
Мана Яраканăн ирĕкĕ çапла: Ывăлне куракан, Ăна ĕненекен кашни çын ĕмĕрлĕх пурăнăçлă пултăр, Эпĕ ăна юлашки кун чĕртсе тăратăп». Иоанн 6:40

• Сирĕн пур çылăхăрсене те тӳлесе каçарнă.
(иртнĕ, хальхи, пуласлăх)
Вăл вара, çылăхсемшĕн пĕр парне кӳнĕ хыççăн, ĕмĕрлĕхех Туррăн сылтăм енне ларнă; Еврейсем 10:12

• Эсир Турă умĕнче çĕнĕ çын. Ку санăн çĕнĕ пурнăçăн пуçламăшĕ.
Çавăнпа та кам Христоспа пĕрле пулсан, вăл çĕнĕ çын пулса тăрать: ĕлĕкхи япаласем пĕтнĕ; акă пурте çĕнĕлĕх пулса тăчĕ. 2 Коринф 5:17

• Эсĕ Турă ачи пулса тăтăн.
Анчах та Ăна йышăннă çынсене, Хăйĕн ятне ĕненекенсене, Турă ывăлĕсем пулма ирĕк панă: Иоанн 1:12

Ырă ĕçсем пирĕншĕн çăлăнмалли çул мар, вĕсем пирĕн çăлăнăçăн çирĕплетĕвĕ е çимĕçĕ.
Мĕншĕн тесен эпир – Турă пултарулăхĕ, пире ырă ĕçсем тума Турă малтанах хатĕрлесе хунă, Христос Иисуспа пĕрле пултарнă. Ефес 2:10

Тур сыхлатăр!